


Проект ЧР Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать

# Наталия Нагорнова: «Ачасене ÿкерме вĕрентни, вĕсен талантне аталантарни тата хамăн курава йĕркелени – маншăн телей»



**Шупашкар округĕнчи Кÿкеçри «Бичурин тата паянхи самана» музей – республикăри пултарулăх çыннисем валли пархатарлă тĕлпулу вырăнĕ. Нумаях пулмасть кунта Петр Пупин скульптор хăйĕн ĕçĕсемпе тата пултарулăхĕпе паллаштарчĕ. Шăпах ун чухне музейра паллă скульпторпа, Чăваш Енĕн халăх художникĕпе Владимир Нагорновпа тата унăн мăшăрĕпе Наталия Нагорновăпа курнăçма тÿр килнĕччĕ. Çав тери пултараллă, анлă тавракурăмлă тата ĕçчен çынсем вĕсем, иккĕшĕ те ÿнер тĕнчин ахахĕсем.**



Паян вара çак музей Наталия Нагорнова ĕçĕсемпе паллаштарать. Вăл хăйĕн пултарулăхне анлăн кăтартма кăçал кăна пуçланă. Çакăн пирки хăй каласа кăтартрĕ.

– Чăннипе каласан, ачасем ÿссе çитĕнсен кăна эпĕ хамăн куравсене йĕркелесси пирки шухăшлама пуçларăм. Кăçал нарăс уйăхĕнче пĕрремĕш курав Чăваш патшалăх архивĕнче иртрĕ, унтан Шупашкарти Маяковски ячĕпе хисепленекен библиотекăра, Кÿкеçре вара виççĕмĕш курав.

**– Наталия Юрьевна, ÿкерме хăçан пуçланă эсир?**

– Мĕн пĕчĕкрен. Хальхи пек астăватăп. Эпĕ Шупашкарта ÿснĕ, ача-пăча садне çÿренĕ чухне аларан сăрă тата киçтĕк вĕçертмен, килте те пĕрмаях ÿкереттĕм. Çав тери килĕшетчĕ çакă мана. Çиччĕмĕш класра вара ÿнер енĕпе вĕренме каяссине палăртрăм. Шкул пĕтерсен Шупашкарти ÿнер училищине вĕренме кĕтĕм. Ун чухне конкурс çав тери пысăкчĕ: 140 ачаран пире 30 çынна кăна вĕренме илнĕ. Эпĕ питĕ савăнтăм!

**– Çапах та ÿкерессе ахаль килмест-çке. Кам сире хавхалантарнă?**

– Манăн атте ир çĕре кĕчĕ – эпĕ 4 çулта пулнă ун чухне. Пирĕнпе юнашар вара ялан кукка пулнă – аттен пиччĕшĕ. Шăпах вăл Шупашкарти ÿнер училищинчен вĕренсе тухнă. Мана та вăлах таврари илеме курма тата сăрăпа ĕçлеме хăнăхтарнă. Пирĕн килте унăн питĕ хитре ĕçĕ буфетра çакăнса тăратчĕ, пурте ăна курсан тĕлĕнетчĕç. Аслă пичче те сăрăсемпе ĕçлеме вĕрентсе пынă мана. Çапла вара эпĕ шкул саккинчен хулари ÿнер шкулне çÿренĕ.

**– Аслă пĕлÿ те илнĕ эсир ÿнер енĕпе. Çапах та ĕçсене тăратма мĕншĕн васкаман?**

– Училище хыççăн эпĕ Сĕнтĕрвăрринчи шкулта икĕ çул ĕçленĕ, унтан Чăваш патшалăх педагогика институтне художествăпа графика факультетне вĕренме кĕнĕ. Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти музейсенче тимленĕ, халĕ Шупашарти пĕрремĕш ÿнер шкулĕнче ачасене вĕрентетĕп. Вĕсемпе пĕрле хам та куравсене хастар хутшăнатăп, республикăри тата Раççейри конкурссенче мала тухма тăрăшатпăр. Ун чухне чăн та ĕçсене анлăн кăтартма васкаман, мĕншĕн тесен ачасем те пĕчĕкчĕ, лайăх ĕçсем валли вăхăт та кирлĕ…

**– Кÿкеçре курав уçма кам пулăшрĕ. Хавхалантараканни кам?**

– Кунта мăшăрăн тÿпи пысăк. Вăл чăваш халăх художникĕ Владимир Нагорнов. Çумра çирĕп тĕрев тата вăл мана ăнланни, пултарулăхра пĕр чĕлхе тупни çав тери паха.

**– Эсир «Бичурин тата хальхи самана» ятлă ĕçе Шупашкар округне парнелерĕр. Мĕн çинчен вăл?**



Музей валли – парне

– Кунта Бичурин тата хальхи пурнăç тесе шухăшлатăп. Вăл пирĕн çине аякран пăхать, чăн-чăн Турăш теме пулать. Пирĕншĕн вăл паллă тĕпчевçĕ, унпа эпир мухтанатпăр. Шупашкар округĕ вара пушшех те унпа мăнаçланать.

**– «Пултарулăх енĕсем» (Грани творчества) курав ячĕ вара мĕнле çуралнă?**

– Куравра тĕрлĕ жанрпа тунă ĕçсем. Кунта гуашь та, пастель те, акварель те, çупа ÿкернĕ картинăсем. Тĕрлĕ тематикăпа портрет та, пейзаж та пур, ÿнерпе интересленекенсемшĕн питĕ кăсăклă пулмалла. Килсе курăр, çуллахи вăхăтра ачасемпе пулса курни вара асăнмалăх самантсем парнелĕ.

**– Пулас ÿнерçĕсене мĕн суннă пулăттăр?**

– Чи малтанах мĕнле ĕç килĕшнине палăртмалла. Калăпăр, эпĕ нихăçан та тухтăр е вĕрентекен пулатăп тесе шухăшламан, эпĕ хама ÿнер тĕнчинче кăна курнă. Çавăнпа та паян эпĕ питĕ нумай ĕçлетĕп, малалла тата та анлăрах куравсем йĕркелессе шанатăп. Çумра вара Турăран панă çакăн пек талантлă çын, мăшăрăм пулни тата та вăйлăрах пулма пулăшать. Çавăнпа та хавхалану сунатăп пурне те!

**■ Людмила АЛЕКСАНДРОВА**

